Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчеппе тухать

4 (7538) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи январĕн (кăрлач) 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Январĕн 21-мĕшĕнче – Чăваш пичечĕн кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЖУРНАЛИСТСЕМ, ИЗДАТЕЛЬСЕМ ТАТА ПОЛИГРАФИСТСЕМ!**

Сире Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Паян электронлă массăллă информаци хатĕрĕсем анлă аталаннă тапхăрта та хаçатсемсĕр, журналсемсĕр тата кĕнекесемсĕр май çук. Вĕсем пĕрлехи информаци анлăшне туса хураççĕ, пĕтĕмĕшле хаклăлăха йĕркелеме май параççĕ.

Республика журналисчĕсем чăвашсен çутта кăларакане Николай Васильевич Никольский пуçарнă ĕçе малалла ăнăçлă аталантарса пыраççĕ. Республикăра 200 ытла хаçат-журнал тухса тăрать. Периодика изданийĕсен çакăн пек тĕрлĕлĕхĕ республикăри пысăк пĕлтерĕшлĕ событисене, тăван ен экономикипе социаллă аталанăвĕн утăмĕсене курса-пĕлсе тăма май парать.

Сирĕн професси представителĕсем малашлăх пĕлтерĕшлĕ идейăсене халăх патне çитерекенсем пулса тăраççĕ. Чăваш Ен журналисчĕсен ӳсĕмĕсем çук мар, Пĕтĕм Раççейри сумлă конкурссене хутшăнса вĕсем палăрăмлă çитĕнӳсем тăваççĕ.

Чăваш пичечĕ халиччен пухнă ырă йăла-йĕркесене малашне те аталантарса пырăр. Сире пурне те чун хавалĕ, хăвăрăн çĕнĕ шухăшсемпе пултарулăх проекчĕсене пурнăça кĕртсе пыма ăнăçу, çирĕп сывлăх, телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

**ПИЧЕТ ĔÇĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВЕТЕРАНĔСЕМ, ХАÇАТ ТУСĔСЕМПЕ ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Паян пурнăç кунсерен улшăнса тăнă май хаçат ĕçченĕсен яваплăхĕ татах та ӳсет. Çĕнĕлĕхсем, пулса иртекен улшăнусем пирки вулакана тĕрĕс те ăнланмалла тата çиййĕнчех каласа пама тăрăшатăр.

Паян район хаçачĕ район пурнăçне çутатакан пĕртен-пĕр массăллă информаци хатĕрĕ пулса тăрать. Çавăнпа та хаçатпа вулакан хушшинчи çыхăну татах та анлăланасса, хаçат страницисенче çĕнĕрен те çĕнĕ ярăмсем уçăласса, тĕрлĕ жанрлă интереслĕ материалсем пичетленессе шанас килет. Ку вара журналистсен пултарулăхĕнчен, ăсталăхĕнчен нумай килет. Эсир малашне район пурнăçне татах та анлăрах, туллинрех çутатасса шанатăп. Районта пурăнакансене вара район хаçачĕпе туслă пулма, кашни килтех ăна çырăнса илме сĕнетĕп.

Сире пурне те та çирĕп сывлăх, телей, ĕçре ăнăçу сунатăп. Çивĕч перо ăстисен интереслĕ статьясем ытларах çырăнчăр, пĕр-пĕрин пурнăçĕпе кăсăкланасси вара вулакансене алла хаçат илме хистетĕр.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

## Йышăну

### *Полномочи – ял тăрăхĕсем çинче*

Депутатсен районти Пухăвĕ хăйĕн иртнĕ çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчи С-23/3 йышăнăвĕпе 2007 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнчи С-19/3 йышăнăвне пăрахăçланă. Сăмах кунта район территорийĕнче муниципаллă çĕр тĕрĕслевĕн полномочине район администрацийĕнчен вырăнти ял тăрăхĕсене парасси пирки пырать.

## «Çĕнтерӳ ялавĕ» прессăн Ылтăн фондне кĕчĕ

### *Район хаçачĕн ӳсĕмĕ*

Халăхсем хушшинчи «Золотой фонд прессы» Пахалăх палли паракан эксперт канашĕ Раççейре çак паллăна çĕнсе илнĕ хаçатсене палăртрĕ. Çак сумлă наградăна пирĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат та тивĕçрĕ.

Сăмах май палăртатпăр. «Золотой фонд прессы» Пахалăх паллине 2005 çулта Халăхсем хушшинчи «ПРЕССА» профессионаллă выставкăн йĕркелӳ комитечĕ çирĕплетнĕ. Унпа пахалăхлă тата общество пĕлтерĕшлĕ пичет изданийĕсене наградăлаççĕ.

2006 çулта Раççейри библиотека ассоциацийĕ çак паллăна хăй хӳттине илнĕ. Асăннă ассоциаци библиотекăсене «Золотой фонд прессы» Пахалăх паллине тивĕçнĕ хаçатсене хăйсен фончĕсене комплектлама çырăнса илме сĕнет.

2007 çулта Раççейри пысăк çырăнтару агентствисем пахалăхлă прессăна сармалли социаллă тытăм йĕркелеме кирлине йышăнчĕç.

РФ культура министрĕ Александр Соколов çак шухăша ырласа, «Прессăн ылтăн фондне» массăллă информаци хатĕрĕсене общество енчен йĕркелеме май паракан механизм пулнине палăртрĕ.

РФ Культура тата массăллă коммуникацисен министерстви «Золотой фонд прессы» Пахалăх паллине тивĕçнĕ изданисене тĕллевлĕ пулăшу парса тăма сĕнӳ хатĕрлет.

Прессăн Ылтăн фондне кĕнĕ изданисене ятарлă Пахалăх палли пăраççĕ тата «Раççей почтин» 82 çырăнтару каталогне кĕртеççĕ.

Çак паллăна паракан эксперт канашне Раççейри библиотекăсен ассоциацийĕн президенчĕ, Раççейри наци библиотекин директорĕ В.Н. Зайцев тата Раççейри патшалăх библиотекин генеральнăй директорĕ, РФ Президенчĕ çумĕнчи Культура тата искусство канашĕн президиумĕн членĕ, Евразири Библиотекăсен ассамблейин президенчĕ В.В. Федоров ертсе пыраççĕ.

**А. ТИХОНОВ, район хаçачĕн тĕп редакторĕ:**

- Çак наградăна тивĕçнĕ ятпа эпĕ пирĕн хаçата çырăнса илекенсене, ăна вулакансем патне çитерекен почтальонсене, ялкорсене, редакципе куллен çыхăнса ĕçлекен влаç органĕсене, учрежденисемпе организацисене, вĕсен ертӳçисене тав сăмахĕ калатăп.

Редакци коллективĕ хăй умĕнчи тĕллевсене курса тăрать, хаçат пахалăхне лайăхлатассипе малашне те çине тăрса ĕçлеме кирлине ăнланать. Ку ĕçре пире яланхи пекех хаçат тусĕсем пулăшса пырасса шанатăп. Сирĕн сĕнӳсене, асăрхаттарусене, ыйтусене, материалсене эпир хапăлласах йышăнатпăр.

Юлашкинчен хаçат вулакансене Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

## Ĕçре пултаруллисем

### *Пурин кăмăлне те тивĕçтерме тăрăшаççĕ*



*Район центрĕнче вырнаçнă «Сказка» кафене кĕрсен кунти тасалăхпа тирпейлĕхе асăрхамасăр май çук. Апатланма пыракансемпе те кафере вăй хуракансем яланах ăшă кăмăллă, тараватлă. Çавăнпа тулли кăмăлпа тухатăн кунтан.*

*Сăн ӳкерчĕкре куракан 4-мĕш разрядлă повар Алина Юрьевна Казакова кунта 5 çул вăй хурать, аслă поварăн Антонина Владимировна Карпован вара çак отрасльти ĕç стажĕ 30 çул. Шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ хастар ĕçченсем.*

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

## Пире хаклани

### Пĕрремĕш вице-премьер – Шупашкарта



Иртнĕ юн кун Шупашкарта Раççей Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ Сергей Иванов пулнă, «Промтрактор-Промлит» ОООра, ВНИИРта, «Шупашкарти В.И. Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕ» ФПУПра пулса курнă, вĕсенчи ĕç-хĕлпе паллашнă. Шупашкарта хăш ыйтусемпе кăсăкланнине уçăмлатса вăл çапла каланă:

«Промышленность, наука, транспорт, ВПК – манăн тивĕç шутланакан ыйтусем. Чăваш Ен наци проекчĕсене пурнăça кĕртессипе лайăх ĕçлет. Енчен те, калăпăр, пур çĕрте те кунти пек хытă сийлĕ çулсем пулсан, çынсем те телейлĕрех пулĕччĕç...»

## Раççейре

### *Пирус туртма пăрахмалла*

Нумаях пулмасть РФ Правительстви Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлавĕн (ВОЗ) табак туртнине хирĕç кĕрешмелли Конвенцийĕ çумне пирĕн çĕршыв пĕрлешнине пĕлтернĕ. Çак Конвенцие 167 çĕршыв тата Евросоюз алă пуснă.

Пирĕн çĕршывра арçынсен 60 процентĕ ытла, хĕрарăмсен 40 процентĕ ытла хăй сывлăхне пируспа наркăмăшлать. Çак ретре çамрăксен хисепĕ ӳсни уйрăмах пăшăрхантарать.

Европăри çĕршывсенче çак сиенлĕ йăлапа пĕр шелсĕр кĕрешеççĕ. Обществăлла вырăнсенче пирус туртма чараççĕ. Пируса рекламăламаççĕ. Табак çав тери хаклă. Туртман çынсен сывлăхне упрасси çине тимлĕ пăхаççĕ.

Çак мерăсене пирĕн çĕршывра та пурнăçламалла пулать. Конвенци тепĕр пилĕк çултан Раççейре вăя кĕмелле. Апла пулсан халех çак сиенлĕ йăлапа сыв пуллашма тăрăшмалла.

## Районта: ĕнер, паян, ыран

### В. Путин Указне вăя кĕртер

2008 çул Çемье тата ырă ĕçсен çулталăкĕ пулнипе палăрса тăрать. Çавна май районта ку тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕçсен планне палăртнă. Кашни библиотекăрах «Çамрăк çемье» клуб хăйĕн ĕçне малалла тăсĕ. Уйăхсерен клуб членĕсем çемье уявĕсем, медицина тата психологи ĕçченĕсем хутшăннипе çавра сĕтелсем, ăсталăх конкурсĕсем, куравсем ирттерĕç. Çавăн пекех тĕрлĕ акцисем, информаци кунĕсем ирттерме палăртнă.

### Н.Г. Ванеркин хисеплĕ ята тивĕçнĕ

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2008 çулхи кăрлачăн 9-мĕшĕнчи 17-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» патшалăх унитари предприятин директорне Николай Григорьевич Ванеркина «Раççей Федерацийĕн ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Паянхи кун ку предприяти ăнăçлă ĕçлесе пырать. Унăн ĕç кăтартăвĕ Чăваш Республикинче малтисен ретĕнче. Пахалăхлă продукцие пур çĕрте те хапăл тусах йышăнаççĕ. Предприяти çĕнĕ технологисене алла илни аталанăва хăвăртлатма май парать.

### Çĕнтерӳçĕсем паллă

Районти ял хуçалăх предприятийĕсенче выльăх пăхакансен 2007 çулхи ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ, çĕнтерӳçсене палăртнă.

Ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăна «Герой» хуçалăх тивĕçнĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене «Оринино» тата «Свобода» хуçалăхсем пайларĕç.

Лайăх кăтартупа палăрнă, 4000 килограмм ытла сĕт суса илнĕ ĕçченсем «Герой» хуçалăхран пулчĕç: Елена Михайловна Мясникова, Любовь Николаевна Троицкая, Наталия Вячеславовна Рыжкова. Çавăн пекех Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Валентина Валериановна Макарова, Надежда Николаевна Орлова, Вера Ильинична Гордеева, Надежда Валентиновна Михайлова, «Оринино» хуçалăхри Василиса Владимировна Иванова, Эльвира Валерьевна Васильева тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Галина Юрьевна Платонова лайăх кăтартусемпе палăрчĕç.

Сыснасен талăкри чи пысăк вăтам ӳт хушаслăхĕ «Ударник» хуçалăхра – 480 грамм, мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри чи пысăк вăтам ӳт хушаслăхĕ «Свобода» хуçалăхра – 748 грамм пулчĕ.

### 25,9 пин тенкĕ налук шыраса илнĕ

Раççей Федерацийĕн налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн, суд пристав службин районти уйрăмĕн, районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсем январĕн 16-мĕшĕнче налук тӳлеме маннă уйрăм çынсемпе индивидуаллă предпринимательсем патне çула тухрĕç. Рейд вăхăтĕнче 33 çынна 25,9 пин тенкĕ тĕрлĕ налук укçи тӳлеттернĕ. Çакăн йышши рейдсем малашне те пулĕç. Çавăнпа та яваплă ĕçченсем алăкран пырса шаккасса кĕтес марччĕ, налуксемпе парăмсене вăхăтра тӳлесчĕ.

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – аттепе аннене, кукамипе кукаçине, асаттепе асаннене – Муркаш районĕнчи Якаткасси ялĕнче пурăнакан **Василиса Николаевнапа Геннадий Иванович ИВАНОВСЕНЕ** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Аттепе аннене çĕре çити пуç таятпăр, вĕсем пурришĕн савăнатпăр, нумай-нумай çул пурăнма ырă сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ултă ачи, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, 14 мăнукĕ тата икĕ кĕçĕн мăнукĕ.**

---



Пирĕн чи юратнă тата çывăх çыннăмăра – Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Карманкасси ялĕнче пурăнакан **Римма Митрофановна СТОЛЯРОВАНА** 65 çулхи юбилейĕ ячĕпе чун-чĕререн хисеплесе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Утас кун-çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем.**



Юратнă аннене, хаклă мăшăра, çывăх тăванăмăра – **Любовь Николаевна ЯКОВЛЕВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Сывлăху нихăçан та ан хавшатăр, юрату чун-чĕрере хуçалантăр, ăнăçу яланах пĕрле çӳретĕр.

Пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапакан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр пултăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кил-çурту тăван-пĕтентен ан татăлтăр. Утас çулу такăр, пурнас çулу вăрăм пултăр.

**Юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламласа юратнă мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, тăванĕсем.**

---

Ярославка ял тăрăхĕнчи Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене тата хунямана, ырă кăмăллă асаннене – **Александра Васильевна ВАСИЛЬЕВАНА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Вăл пирĕншĕн тунă ырă ĕçсемшĕн ăна çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Пире татах савăнтарса пурăнма вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, çирĕп сывлăх, такăр çул сунатпăр. Санăн питӳ çинчен савăк кулă ан кайтăр, вак-тĕвекшĕнех кăмăлу ан хуçăлтăр.

Юратнă çыннăмăр! Тавах сана эсĕ пурришĕн, пире яланах вăхăтра ăс панишĕн.

**Саламлаканĕсем: 2 хĕрĕ, 2 кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 7 мăнукĕ, 1 прамăнукĕ.**